

# Ираида Вдовина çуралнăранпа 105 çул çитнине халалласа

**Ираида Григорьевна Вдовина 1913 çулхи авăн уйăхĕн 19-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Сĕнтĕрвăрри районне кĕрекен Кĕчкей ялĕнче çуралнă.**



Ираидăн ашшĕ Григорий Матвеевич Вдовин вĕреннĕ çын пулнă, тĕрлĕ хаçат-журнал çырăнса илнĕ, вулама юратнă. Вăл ачисене вĕрентсе кăларма тăрăшнă. Ираида ашшĕнчен пĕчĕклех тăлăха тăрса юлнă. Унăн кукашшĕ чаплă кĕслеçĕ пулнă, амăшĕ вара хăйĕн илемлĕ те янравлă сассипе пурне те тĕлĕнтернĕ.

Ача чухнех Ираида халăх юрри-такмакĕпе интересленнĕ. Вăл халăх юррисене итлеме юратнă. Шкулта вулама-çырма хăнăхсан вара илтнĕ пек юрăсене вĕренсе юлма, сăмахĕсене çырса пухма тытăннă. 5-6-мĕш класа çитнĕ тĕле вăл тетраде 50-60 юрă таран çырса хума ĕлкĕрнĕ.




**Ираида Григорьевна**
**халăхран 1000-е яхăн юрă çырса илнĕ.**

**Тăван ялти çичĕ класлă шкула пĕтернĕ хыççăн Ираида Шупашкарти педагогика техникумне вĕренме кĕнĕ. Техникумра музыка урокĕсене паллă та чаплă композитор, дирижер В.П Воробьев ирттернĕ. Уçă саслă хĕр ачанпа вăл тӳрех асăрханă. Кĕçех Ираида техникум хорĕн солистки пулса тăнă.**



**Техникумран вĕренсе тухсан Ираида Григорьевна Çĕрпӳри ачасен суртĕнче вăй хунă, каярах шкулсенче ĕçлеме тытăннă.**

**Халăх юрăçи Чăрăш Туçари çичĕ çул вĕренмелли шкулта учительницăра, Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи вăхăтĕнче директорта ĕçленĕ.**




**Чи малтан унăн вăйлă сассине тантăшĕсем хакланă: вăл пымасăр вăйă та пуçламан.**

**Ираида Вдовина – тĕрлĕ юрă конкурсĕсен çĕнтерӳçи.**




– Юрă ватăлтармасть… Юрă, – шӳтленĕ яланах Ираида Григорьевна.

– Тепĕр чухне ӳкме пуçласан та тăратса лартать вĕт…Юрăпа унпа ан шӳтле. Вăл çав тери вăйлă!










**Мускавра Ираида Вдовина юрланă чăваш халăх юррисен 3 пластинки тухнă. 1985 çулта «Чувашские народные песни, напетые И. Вдовиной» ятпа кĕнеке пичетленсе тухнă, унта 222 юрă кĕнĕ.**




Ч̆аваш халăхĕ Ираида Вдовина юрăçă ятне асра тытать. Çулсерен ăна асăнса тĕрлĕ конкурс, фестиваль ирттерет.






Министерство культуры, по делам национальностей и архивного дела Чувашской Республики

Чувашский республиканский Дом народного творчества

Чебоксарское музыкальное училище им. Ф. П. Павлова

V Межрегиональный конкурс исполнителей народной песни имени Ираиды ВДОВИНОЙ

"Ай, юрлар-и!"

("Пой, душа!")

ДИПЛОМ

НАГРАЖДАЕТСЯ

Фольклорный ансамбль

**«Ямаш»**

Цивильского района

(рук. Э. Тимофеева)

***за активное участие в конкурсе и пропаганду народных песенных традиций***

Председатель жюри, доктор искусствоведения, профессор — М. Г. Кондратьев

г. Чебоксары

23 ноября 2013 г.

**Регионсем хушшинче иртекен «Ай, юрлар-и!..» конкурс**




Çĕрпӳ районĕнчи Кăнар ялĕнче Ираида Вдовина ячĕллĕ мемориал музейĕ пур. Кунта паллă юрăçăпа çыхăннă сăн ӳкерчĕк нумай.